**Интернет конкурсăн ыйтăвĕсемпе хуравĕсем**

**ИК – 2019 Ыйтусем**

**1.** *Виçĕм, тăватăм* сăмахсем хăш пуплев пайĕ шутланаççĕ, ăслăлăхра мĕнле ятпа çӳреççĕ?

2. *Каçчен, ирччен* сăмахсенче тĕл пулакан **-чен(-ччен)** аффикса сăмах тĕпĕ çумне мар, яланах аффикс çумне хăш пуплев пайĕ йышăнать? Ку аффикса мĕнле терминпа паллă тăваççĕ?

3. Ансăр сăмах майлашăвĕн интонацийĕ чăвашпа вырăс пуплевĕсенче паузăна тата сасă çĕкленĕвне кура мĕн енчен уйрăлса тăрать? (Кĕскен схема ӳкермесĕрех ăнлантарăр.)

4. *Ар çын* сăмах майлашăвĕ чăннипех сăмах майлашăвĕ пулнине чăваш чĕлхинчен тата ытти 1 – 2 тĕрĕк чĕлхинчен илнĕ тĕслĕхсемпе танлаштарса ĕнентерĕр.

5. Вырăссен *беременная* сăмах пур. Ун пĕлтерĕшĕпе чăвашла мĕн-мĕн теме пулать?

6. Федор Павловăн çамрăк чухнехи пурнăçне мĕнле çыравçă çутатса панă?

**7.** Çак сăмахсем И.Я. Яковлевăн хăш калавĕнче тĕл пулаççĕ?

*Аптранă кăвакал кутăн чăмнă, тет.*

8. *«Эсĕ пирĕн картари ăмăрт кайăк»,* – тесе Николай Бестужев кам çинчен каланă?

9. Н. Терентьевăн 1-мĕш пьеси мĕн ятлă, вăл хăçан, ăçта пичетленнĕ?

10. «Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ» сăвăра Ухсай Яккăвĕ чăваш чĕлхин мĕнле пĕлтерĕшĕсене сăнарлă палăртать?

11. Хĕр йывăççи (символĕ) мĕн?

12. ЧР Кĕнеке палатин пĕрремĕш директорĕ кам пулнă? Ятне, хушаматне çырăр.

13. Улатăр хулине çуралнă, «Союзкино» тата «Чăвашкино» студисенче ĕçленĕ режиссер тата сценарист ячĕпе хушаматне калăр.

14. «Хыпар» издательство çурчĕн хăш кăларăмĕ тухма пуçланăранпа кăçал çирĕм çул çитет?

15. К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ Мускава виççĕмĕш хут гастроле мĕнле спектакльпе кайнă? Спектакль ятне, авторне кăтартăр. Спектакле хăш театр сцени çинче кăтартнă.

16. Пĕр тăван арçынсен арăмĕсем пĕр-пĕриншĕн кам пулаççĕ?

17. *Вĕрене купăс* тенине вырăсла куçарăр.

18. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче хĕрарăм чурана мĕнле сăмахпа палăртаççĕ?

19. Чăваш топонимĕсенче тĕл пулакан *-нар/-нер (-анар/-енер)* топоформант мĕне пĕлтерет?

20. *Пĕр* хисеп ятне сăпат тăрăх улăштарăр.

**Хуравсем**

1. Хисеп ячĕ,  йĕрке хисеп ячĕ.
2. Глагол, пулма пултаракан причасти аффиксĕ (**-и-**) çумне йышăнать.
3. Сасă пĕтĕм сăмах майлашăвĕ çийĕпе çĕкленет , пайсем хушшинче пауза пулмасть, пауза сăмах майлашăвĕ вăрăм чухне кăна палăрать.
4. Ар ача , хĕр ача , хĕр çын, ир кеше, ир бала.
5. Йывăрланнă, йывăр çын, йывăр çын пул, хĕрĕх чĕрнеллĕ, хĕрĕх чĕрнеллĕ пул, хĕрĕх чĕрнелен.
6. А. Артемьев
7. «Çил-тăвăл»
8. Н. Бичурин çинчен
9. «Сирень аллейи». 1951, «Ялав»  журналта
10.Чĕвĕл-чĕвĕл калаçмалли тăван чĕлхе, хĕрпе калаçмалли ачаш чĕлхе, çунтаракан кăвар чĕлхе, 77 хĕлĕхлĕ тăван чĕлхе.
11. Хăва.
12. Александр Иванов (Ванюшке).
13. Борис Шелонцев (Штатланд).
14. «Кил-çурт, хушма хуçалăх»
15. «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли». Б. Чиндыков. А.С. Пушкин ячĕллĕ тетр сцени çинче.
16. Килĕнтеш.
17. Скрипка.
18. Хăрхăм.
19. Юхан шыва пĕлтерет. «Çырма», «шыв» пĕлтерĕшсене йăнăш шутламалла мар.
20. Пĕр хисеп ячĕ 1-2-мĕш сăпат аффиксĕсене йышăнмасть, 3-мĕш сăпат форми – пĕри.